Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнченпе тухать

40 (8001) № * Юн кун, 2012 ҫулхи ҫу (май) уйӑхӗн 30-мӗшӗ * Хакӗ ирӗклӗ

Июнӗн 1-мӗшӗ – Ачасене хӳтӗлемелли пӗтӗм тӗнчери кун

**ХАКЛӐ ЕНТЕШӖМӖРСЕМ!**

Ачасене хӳтӗлемелли пӗтӗм тӗнчери кун ячӗпе хӗрӳллӗн саламлатӑп сире!

Ҫак уява 1950 ҫултан тытӑнса пур ҫӗр-шывра та паллӑ тӑваҫҫӗ. Кашни хутӗнчех вара вӑл пире ачасен тӗп прависемпе ирӗклӗхсем пурри, анчах та хӑйсене хӑйсем тӗллӗн хӳтӗлеме вӗсен майсем ҫителӗксӗрри пирки аса илтерет. Ҫавӑнпах ӗнтӗ аслисен кашни ача тӗлӗшпе тимлӗ пулмалла, пурӑнма тата малалла аталанма пур майсене те туса пама тӑрӑшмалла.

Ачасем – наци пуласлӑхӗ, этемлӗх ӑрӑвне тӑсакансем, пирӗн мухтав тата чыс. Эпир ҫавна шанса тӑратпӑр: Чӑваш Ен вӑй-хӑвачӗ – унӑн ҫыннисенче, наци сывлӑхӗ вара эпир ачасем тӗлӗшпе мӗнле тимлӗх уйӑрнинчен килет.

Эпир ачасене чи лайӑххипе хитрине пама, вӗсене пӗр-пӗрне юратма тата хисеплеме, пӗр-пӗриншӗн тӑрӑшма хӑнӑхтарма, патриотизм тата туслӑх туйӑмне аталантарма тивӗҫ. Ҫавӑн чухне кӑна эпир чӑннипех те тивӗҫлӗ ӑру пӑхса ӳстерме пултаратпӑр.

Хальхи вӑхӑтра пирӗн республикӑра ачасен сывлӑхӗн, вӗсене воспитани тата пӗлӳ парассин ыйтӑвӗсем пысӑк тимлӗхре. Эпир ҫут тӗнчене килнӗ кашни пӗчӗк гражданиншӑнах чунтанах хӗпӗртетпӗр, вӑл сывлӑхлӑ ӳстӗр тесе пӗтӗмпех тӑватпӑр. Чӑваш Енре пурнӑҫа кӗртекен пур социаллӑ программӑсем те амӑшлӑхпа ачалӑхшӑн тӑрӑшассипе ҫыхӑннӑ. Ку енӗпе патшалӑх пулӑшӑвӗ ҫултан-ҫул ӳссе пырӗ кӑна.

Ашшӗ-амӑшӗсене, аслашшӗсемпе асламӑшӗсене, хӑйсен пурнӑҫне ҫитӗнекен ӑрӑва пӑхса ӳстерессине халалланисене пурне те тав тӑватӑп. Аслисене те, ачасене те ҫирӗп сывлӑх, лайӑх кӑмӑл-туйӑм сунатӑп, сирӗн ырӑ пур ӗмӗтӗрсем те пурнӑҫланса пычӑр!

**Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ**
**М. ИГНАТЬЕВ.**



**ХАКЛӐ АЧАСЕМ ТАТА АШШӖ-АМӐШӖСЕМ!**

Сире ҫывхарса килекен Ачасене хӳтӗлемелли пӗтӗм тӗнчери кун ячӗпе чунчӗререн саламлатӑп.

Ачалӑх кашни ҫыннӑн пурнӑҫӗнче нихҫан манӑҫми тарӑн йӗр хӑварать. Малашлӑх мӗнле пуласси те шӑпах ҫак тапхӑртан нумай килет. Ҫавӑнпа та хамӑр ачасем каярахпа пурнӑҫра хӑйсен вырӑнне тупчӑр, пурнӑҫ ҫулне тӗрӗс суйласа илччӗр тесен пирӗн, ашшӗ-амӑшӗсен, малтанах шухӑшламалла, тӗрӗс воспитани парса ӳстермелле: вӗсене мӗн пӗчӗкрен пурнӑҫ илемне курма, ыррипе усала уйӑрма хӑнӑхтармалла. Ытларах ырӑ ӗҫ тума вӗрентмелле. Ҫавӑн чухне ҫеҫ вӗсем кирек епле йывӑрлӑха та ҫӗнтерме пултарӗҫ, пурнӑҫ урапи айне пулмӗҫ.

Ачасене телейлӗ пулма ытла нумай та кирлӗ мар вӗт: вӗсене юратмалла ҫеҫ. Апла пулсан пирӗн, ашшӗ-амӑшӗсен, воспитательсен, вӗрентекенсен, вӗсем ҫакна туйччӑр тесе тӑрӑшмалла, вӗсемшӗн ырӑ тӗслӗх пулмалла.

Чӑваш Республикин, РФ Правительствисем ачаллӑ ҫемьесене пулӑшас тӗллевпе нумай ӗҫ тӑваҫҫӗ. Ҫакӑ чылай ҫемьене ҫӑмӑллӑх парать. Анчах та пирӗн, ашшӗ-амӑшӗсен, тимлӗх, юрату кирлине, вӗсен пуласлӑхӗшӗн хамӑр яваплине пӗр самантлӑха та манмалла мар. Тӑван кил вӗсемшӗн чун туртнӑ вырӑн пултӑр тесе йӑлт тумалла.

Пурне те сире ҫирӗп сывлӑх, телейлӗ вӑрӑм кун-ҫул сунатӑп. Ӑнӑҫу пурнӑҫ ҫулне уҫсах пытӑр. Ачӑрсем яланах савӑнтарччӑр.

**Район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Р. ТИМОФЕЕВ.**

Республикӑра

## Влаҫ тытӑмне улӑштарать

**ЧР Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев «Чӑваш Республикинче патшалӑх управленине лайӑхлатмалли мерӑсем ҫинчен» Указ кӑларнӑ. Документа ӗҫ тӑвакан влаҫ органӗсен тухӑҫлӑ тытӑмне туса хурас тӗллевпе йышӑннӑ.**

Указпа килӗшӳллӗн ЧР Транспорт тата ҫул-йӗр хуҫалӑхӗн министерствине туса хунӑ. Ӑна унччен Хула строительствин тата обществӑлла инфраструктура аталанӑвӗн министерствин транспорт тата ҫул-йӗр хуҫалӑхӗн сферинчи ӗҫ-хӗлне панӑ. ЧР Ҫыхӑну тата информатизаци енӗпе ӗҫлекен патшалӑх комитетӗнчен ЧР Информаци политикипе массӑллӑ коммуникацисен министерствине туса хунӑ. Ӑна унччен Культура министерствин массӑллӑ информаци, издательство тата полиграфи сферинчи ӗҫ-хӗле панӑ.

ЧР Пуҫлӑхӗ 2012 ҫулхи майӑн 28-мӗшӗнчи указӗсемпе лартнӑ:

М.В. Янковские – ЧР Министрсен Кабинечӗн Председателӗн ҫумне – ЧР транспорт тата ҫул-йӗр хуҫалӑхӗн министрне;

В.Н. Громова – ЧР строительство, архитектура тата пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑх министрне;

В.В. Андреевӑна – ЧР информаци политикипе массӑллӑ коммуникацисен министрне;

В.П. Ефимова – ЧР культура, национальноҫсен ӗҫӗсен тата архив ӗҫӗн министрӗн тивӗҫӗсене пурнӑҫлама.

Йыхрав

## Июнӗн 10-мӗшӗнче – Акатуй

Ҫурхи ака-суха ӗҫӗсене вӗҫленӗ ятпа ирттерекен районти юрӑ, ӗҫ тата спорт уявӗ кӑҫал Муркаш ялӗнче июнӗн 10-мӗшӗнче иртет.

59-мӗш уява хатӗрленсе ирттерме район администрацийӗн 2012 ҫулхи майӑн 21-мӗшӗнчи 461 номерлӗ йышӑнӑвӗпе йӗркелӳ комитечӗ тунӑ, ӗҫ планне ҫирӗплетнӗ.

Уявра ӗҫ паттӑрӗсене, ӗҫ династийӗсене чысласҫӗ. Нумай ачаллӑ ҫемьесене ҫӗр илме свидетельствӑсем, амӑш капиталӗн сертификачӗсене параҫҫӗ. Уявра кунӗпех юрӑ-кӗвӗ янӑрӗ. Хастаррисем спорт ӑмӑртӑвӗсенче вӑй виҫӗҫ. Суту-илӳ предприятийӗсем тутлӑ апатҫимӗҫ сӗнӗҫ.

Пурне те Акатуя чӗнеҫҫӗ!

# Пӗтӗмпех – ачалӑхшӑн, пӗтӗмпех – ачасемшӗн

***Чи асра юлмалли, хаваслӑ тапхӑр вӑл кирек камшӑн та – ачалӑх кунӗсем. Ӑнланатпӑр: пурин те пӗр пек иртмест вӑл. Хальхи вӑхӑтра ашшӗ-амӑшӗсӗр, вӗсен хӳтлӗхӗсӗр ӳсекенсем, ӑнӑҫсӑр ҫемьесем те ҫук мар. Ачаранах инвалидсем те пур. Анчах та пурин те вӗсен ачалӑх кунӗсем пӗрре кӑна килеҫҫӗ. Ҫавна май пуриншӗн те вӑл тапхӑр асра юмалла, савӑнӑҫлӑ ирттӗр тесе ҫӗр-шыв шайӗнче те меллӗрех майсем туса пама тӑрӑшаҫҫӗ. Вӗсем пирки каласа пама пулчӗ те ӗнтӗ Сывлӑха сыхлас ӗҫ тата социаллӑ аталану министерствин районти социаллӑ хӳтлӗх пайӗн пуҫлӑхӗ Нина Пантелеевна ПЕТРОВА:***

– Районӗпе ҫак вӑхӑта ачаллӑ 4497 ҫемье шутланать пулсан, вӗсенче пурӗ 7299 ача воспитани илет. Пӗчӗк тупӑшлӑ 1932 ҫемьере 3493 ача. Тулли мар ҫемьесем 937, кун пек ҫемьесенче 1253 ача. 118 ҫемьере 120 инвалид ача. Нумай ачаллӑ 393 ҫемьере 1247 ача ӳсет. Вӑл шутран 3 ачаллӑ ҫемьесем 337; 4 ачаллисем 47; 5 ачаллисем 8; пӗр ҫемьере – 8 ача.

Ҫемьесенчи лару-тӑрӑва пирӗн специалистсем тишкерсех тӑраҫҫӗ. Уйрӑмах йывӑр лару-тӑрури ҫемьесене пысӑк тимлӗх уйӑратпӑр, май пур таран пулӑшатпӑр. Кунта вӗсене тумтирсемпе тивӗҫтернине те, укҫан пулӑшнине те, ҫу кунӗсенче вара лагерьсенче канса хӑйсен сывлӑхне ҫирӗплетме майсем туса панине те кӗртмелле.

Кунсӑр пуҫне патшалӑх енчен те пулӑшу ҫук мар. Акӑ кӑҫал ҫулталӑк пуҫланнӑранпа ачасене уйӑхсерен пособи тӳлесе тӑма республика бюджетӗнчен 8548,04 пин тенкӗ, республика бюджетӗнчен опекунсемпе попечительсене пособи 1700,01 пин тенкӗ, ачасене ҫемьене пӑхма илнисене 566,66 пин тенкӗ, ача ҫулталӑк ҫурӑ тултаричченхи тапхӑрта тӳлеме пособи федераллӑ бюджетран 5505,38 пин тенкӗ, ача ҫуралнӑ чухне пӗр хут паракан пособи валли 759,77 пин тенкӗ, призывпа ҫар службинче тӑракан ҫие юлнӑ мӑшӑрне пӗр хут тата уйӑхсерен тӳлесе тӑма пособи 235,59 пин тенкӗ уйӑрнӑ.

Паллӑ ӗнтӗ, хальхи ҫӗршывра демографи тӗлӗшӗнчи лару-тӑру йӗркеллех мар. Ҫавна май ку енӗпе татӑклӑ улшӑну тӑвас, ҫемьесенчи ачасене кирлӗ пек воспитани парса ӳстерес енӗпе патшалӑх енчен пулӑшу мелӗсем сумлӑ темелле.

Хальхи вӑхӑтра иккӗмӗш ача ҫуралсан ҫемьесене ача амӑшӗн (ҫемье) капиталӗпе тивӗҫтереҫҫӗ. Унӑн виҫине вӑхӑтран вӑхӑта индексацилеҫҫӗ. Федераллӑ бюджетран уйӑракан ку укҫа-тенкӗ сумми 387,64 пин тенкӗпе танлашать. Районта ӑна ҫак вӑхӑта пӗтӗмпе 1154, вӑл шутран кӑҫал 89 ҫемье илнӗ те ӗнтӗ, унпа усӑ та курнӑ. Кунсӑр пуҫне кӑҫалхи январӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа ҫемьере виҫҫӗмӗш ача ҫуралсан республика шайӗнчен те ача амӑшӗн (ҫемье) капиталӗпе тивӗҫтереҫҫӗ. Унӑн сумми – 100 пин тенкӗ. Асӑннӑ суммӑна илме сертификатсене 22 ҫемье тивӗҫрӗ, черетре татах 11 ҫемье. Ку укҫатенкӗпе ҫемье членӗсем хӑйсен ҫурт-йӗр условийӗсене лайӑхлатма, ачисене вӗрентме пултараҫҫӗ.

Ҫавӑнпа пӗрлех виҫӗ ачаллӑ ҫемьесене тӳлевсӗр ҫӗр участокӗсем уйӑрса парассине те пӑхса хунӑ. 2011 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗнчен тытӑнса кун пек нумай ачаллӑ ҫемьесене 85 шута илнӗ. Вӗсенчен 25 ҫемьене ҫӗр участокӗпе тивӗҫтернӗ учета илнӗ, 20 ҫемьене тивӗҫтернӗ те ӗнтӗ.

Районӗпе шута илнӗ ӑнӑҫсӑр ҫемье 30 шутланать. Вӗсенче 62 ача ӳсет. Тумтир тавраш ӗпе 8 ҫемьене пулӑшрӑмӑр. 3 ҫемьене вара республика Сывлӑха сыхлас ӗҫ тата социаллӑ аталану министерствин урлӑ пулӑшу мелӗсемпе тивӗҫтернӗ. Ачасем йывӑр лару-тӑрура пурӑнакан 49 ҫемьере пултӑмӑр. Ачасен сывлӑх сиплевӗн «Солнышко» лагерьне каймашкӑн 12 путевкӑпа тивӗҫтернӗ. Ҫакӑ вӑл, палӑртрӑм ӗнтӗ, йывӑр лару-тӑрурлӑ ҫемьесенче ҫитӗнекен ачасен валли.

Ача амӑшӗсене пулӑшу мелӗсемпе тивӗҫтерессине пысӑк тимлӗх уйӑраҫҫӗ. Ҫакӑ ҫие юлнине палӑртнинченех тытӑнать. Акӑ пулас ача амӑшӗ вӑхӑтра учета тӑчӗ пулсан, вӑл пӗр хут паракан 465,2 тенкӗ пособие тивӗҫет. Ҫие юлнипе тата ача ҫуратнипе паракан пособин чи пысӑк виҫи 36563 тенкӗпе танлашать. Ача ҫуралсан пӗр хут паракан пособи – 12405,32 тенкӗ.

Призывпа службӑра тӑракан ҫар ҫыннин ҫие юлнӑ мӑшӑрне пӗр хут пособи 19645,12 тенкӗ, уйӑхсерен – 8419,34 тенкӗ тӳлесе тӑратпӑр.

Ача ҫулталӑк ҫурӑ тултаричченхи амӑшӗсене уйӑхсерен пособи илсе тӑраҫҫӗ. Пособин чи пӗчӗк виҫи пӗрремӗш ачашӑн 2326 тенкӗпе, иккӗмӗш ачашӑн 4651,99 тенкӗпе танлашать. Ача ҫулталӑк ҫурӑ тултаричченхи уйӑхсерен парса тӑракан пособин чи пысӑк виҫи вӑтам ӗҫ укҫин 40 процентӗ чухлӗ е 14625 тенкӗ.

Ачасене хӳтӗлемелли куна пӗтӗм тӗнчипех паллӑ тӑваҫҫӗ. Ачасем – пирӗн пуласлӑх, пирӗн малашлӑх. Апла пулсан вӗсене мӗнле пӑхса ӳстерни, мӗнле воспитани пани, пӗр-пӗрне хисеплеме хӑнӑхтарни – ку вӑл пӗтӗмпех хамӑршӑнах. Ҫавӑнпа та кашни ача юлташӗсене, ашшӗ-амӑшне, Тӑван ҫӗр-шыва юратса, чӑн-чӑн патриот пулса ӳстӗр тесе тӑрӑшмалла. Ҫавӑн чухне эпир чӑннипех те пирӗн малашлӑх шанчӑклӑ алӑра тесе ҫирӗплетсех калама пултарӑпӑр.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Саламлатпӑр

Коллектив МУП ЖКХ «Моргаушское» сердечно поздравляет экскаваторщика **ХЛАШЕВА Владимира Алексеевича**, проработавшего на предприятии более 20 лет, с юбилеем.

50 – не праздник старости,
Пусть не чувствует сердце усталости.
Это зрелость во всем и всегда,
Это опыт большого труда.
Это возраст совсем не большой,
Ежели не стареть душой.
Счастья вам полную чашу,
За труд и отзывчивость вашу.



Хаклӑран та хаклӑ мӑшӑра, юратнӑ аннене, асаннене, кукамая, аппана, йӑмӑка – Отарккӑ ялӗнче пурӑнакан **Роза Михайловна ВАСИЛЬЕВӐНА** 55 ҫулхи юбилей ячӗпе чун-чӗререн ӑшшӑн саламлатпӑр. Ҫирӗп сывлӑх, иксӗлми вӑй-хал, вӑрӑм кун-ҫул, телей сунатпӑр. Тавах сана ырӑ кӑмӑлушӑн, чун ӑшшине пире парнеленӗшӗн. Эпир санпа мухтанатпӑр, эс пурришӗн савӑнатпӑр.

**Саламлаканӗсем: мӑшӑрӗ, ывӑлӗпе кинӗ, хӗрӗпе кӗрӳшӗ, мӑнукӗсем, ҫывӑх тӑванӗсем.**

Ҫырӑнтару – 2012

**Районти «Ҫӗнтерӳ ялавӗ» хаҫата июльтен илсе тӑма малалла ҫырӑнтараҫҫӗ. 6 уйӑха ҫырӑнмалли хак – 204 тенкӗ.**

**Райхаҫат редакцийӗ.**

**Майăн 31-мĕшĕ – Пирус туртма пăрахмалли пĕтĕм тĕнчери кун**

# Ыттисем çинчен те шухăшласчĕ

Сывлăха укçалла илме май çуккине пурте лайăх ăнланатпăр ĕнтĕ. Апла пулин те çынсенчен чылайăшĕ хăйсен сывлăхне сыхлама тăрăшмасть. Тăрăшмасть кăна мар, куç пек упрамалли çак ырлăха тăрăшсах хавшатать.

Сывлăха сиен кӳрекен факторсенчен пĕри вăл – пирус туртни. Юлашки вăхăтра вара çак кирлĕ мар япалана арçынсем кăна мар, хĕрсемпе хĕрарăмсем, çитменнине тата шкул ачисем те çăвара хыпса паклаттарса çӳреççĕ.

Чылай патшалăхра пирус туртнипе çине тăрса кĕрешеççĕ пулсан, пирĕн патра вара ăша тĕтĕм çăтакансен йышĕ хушăнсах пырать. Эпĕ тухтăр мар пулин те, пирус туртнин сиенĕ пирки питĕ лайăх пĕлсе тăратăп. Пирус туртнине пула кăна çĕр çинче çулсерен миллионшар çыннăн нурнăçĕ вăхăтсăр татăлать. Пăхатăн та тĕлĕнетĕн. Акă чип-чипер патвар каччăпа чиперкке хĕр юнашар утса пыраççĕ. Иккĕшĕ те драконсем пек тĕтĕм паклаттараççĕ. Мĕнле хĕр-ха вăл çăварĕнчен тислĕк çĕрĕкĕ пек пирус йӳçĕклĕхĕн шăрши кĕрет пулсан?

Пирус туртассипе кĕрешес ĕçре чылай çĕршывра тĕрлĕ майсемпе усă кураççĕ. Ачасене йĕркеллĕ воспитани панине пăхмасăрах нумай çĕрте пирус туртакансене ĕçе те илмеççĕ. Мĕншĕн тесен туртакан çынран ĕçре усси сахалрах. Вăл ĕç вăхăтне ытларах пирус туртса пĕтернисĕр пуçне çул кайнă çемĕн ытларах чирлет, хăй ĕçлекен предприятие тăкак кӳрет.

Эпĕ пĕлнĕ тăрăх Челябинскри пĕр пысăк металлурги предприятийĕнче пирус туртакансене ĕçе йышăнмаççĕ тенĕччĕ. Кун пек йышăнăва эпĕ питĕ тĕрĕс тесе шухăшлатăп. Çак тĕслĕхе пирĕн хамăр патра та пурнăçа кĕртмелле. Шухăшласа пăхăр-ха, мĕнле тухтăр вăл хăй пирус туртать пулсан? Ахальтен мар ĕнтĕ пирус туртакансем çапла каланине те илтме пулать: «Тухтăрсем хăйсем те туртаççĕ вĕт-ха»,– теççĕ. Тухтăрсен çынсене тĕрĕс тĕслĕхсемпе сиплемелле, пирус туртакан тухтăр сывлăх сыхлавĕн учрежденийĕнче ĕçлемелле мар тесе шутлатăп.

Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче ашшĕ-амăшĕсен комитечĕн председателĕ пулнă май манăн час-часах шкул ачисем пирус туртнă тĕслĕхсене курма май килет. Хăйсем пирус тăршшĕ çитĕннĕ кăна теме пулать, анчах... Çак киревсĕрлĕх вăл – ачасене тĕрĕс мар воспитани пани, ку тĕлĕшпе ашшĕ-амăшĕ те, шкул коллективĕ те çителĕксĕр ĕçлени.

Ман шутпа ача-пăча учрежденийĕсенче пирус туртакан çынсем ĕçлеме тивĕç мар. Пирус туртакан учитель ачасемшĕн мĕнле тĕслĕх пулса тăрать-ха? Ачасем яланах хăйсен ашшĕ-амăшĕнчен, хăйсенчен аслăрах ытти çынсенчен, вăл шутра учительсенчен те, япăххине те, лайăххине те илме тăрăшаççĕ. Çавăнпа та пирĕн çитĕнекен ăрăва ытларах хамăра лайăх тытса тĕрĕс çулпа утма вĕрентмелле.

Çынсен сывлăхĕ – наци пуянлăхĕ тесе ахаль каламан. Упрасчĕ пирĕн çак пуянлăха. Пирус туртни этеме вăхăтсăр çак çутă тĕнчерен уйрăлма «пулăшнине» ачаранах пурин те пĕлмелле. Çакна ăнланса тивĕçлĕ йышăнусем тăвасси вара – аслисен тивĕçĕ.

**П. ВОРОБЬЕВ,**
**депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ.**
Мăн Сĕнтĕр ялĕ.

## Тав тăватпăр

Пирĕн юратнă мăшăра, аттене, асаттене, хуньстарике – Кăпас ялĕнче пурăннă Вениамин Федорович Терентьева юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, калама çук пысăк хуйха тата çухатăва пирĕнпе пĕрле пайланăшăн çывăх тăвансене, ял-йыша, пускилсене, тус-юлташсене чĕререн тухакан пысăк тав сăмахĕ калатпăр.

**Мăшăрĕ, хĕрĕ, ывăлĕ, кинĕ, мăнукĕсем.**

## Объявления

**ДЕЖУРНАЯ АПТЕКА работает с 7.30 до 22.00 без выходных в с. Моргауши рядом с магазином «Татьяна», цены очень низкие.**

**В организацию требуются: токарь с опытом работы, автомаляр с опытом работы, автослесари по ремонту а/м ГАЗ-66, ГАЗ-53, ЗИЛ-131, УРАЛ.**
**Тел.: 8-927-665-19-89, 8-909-301-90-73. 5-5.**

### МЕБЕЛЬ НА ЗАКАЗ

- **Кухни**
- **Прихожие**
- **Шкафы-купе**
- **Гардеробные**
- **Офисная мебель**
- **Стенки и многое другое...**

АКЦИЯ!!!
Закажи мебель и получи денежный сертификат на покупку бытовой техники.

Адрес: с. Моргауши, ул. Гагарина, д.2
Здание бани- 2 этаж

**Тел: 8-927-665-96-46 Сергей (замер)**
**Вызов дизайнера бесплатный**

### ООО «Виктория»

* Сопровождение сделок с недвижимостью, в т. ч. земельных участков: оформление в собственность, в аренду, регистрация.
* Сопровождение при лицензировании, оценке имущества.
* Составление договоров, исковых заявлений, жалоб, писем.
* Представительство в судах всех инстанций.
* Регистрация, ликвидация ЮЛ, ИП.
* Ведение бухгалтерского учета, составление деклараций, передача их по Интернету.
* Кадровое делопроизводство.

Адрес: г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4 а. Тел. : 44-64-48, факс: 8 (8352) 22-10-60.
E-mail: vika09-2010@mail.ru, сайт: www.victoria-ooo.ru
Доп. офис: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, офис 119. Тел.: 62-4-43.

**Открылся магазин «Секонд-хенд» (комиссионка). Детская, мужская, женская одежда. Цены от 30 руб. Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 25 (территория «Агропромснаба»). График работы с 8 до 17 часов, воскресенье – выходной. Тел.: 8-919-653-15-95. 4-5.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 6-10.**

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:021001:316, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Вахрушева Елена Александровна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Хоп-Кибер, ул. Складская, д. 62.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5, тел.: 63-4-39. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:021001:316. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, территория землепользования СХПК «Хлебороб», земельный участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:021001.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

***

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:200701:316, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Заиченко Николай Трофимович, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, д. Ойкасы, ул. Кузнечная, д. 1а. Заиченко Зоя Николаевна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, д. Ойкасы, ул. Кузнечная, д. 1а. Заиченко Николай Николаевич, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, д. Ойкасы, ул. Кузнечная, д. 1а. Столяров Андриан Николаевич, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, д. Ойкасы, ул. Кузнечная, д. 1а.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5, тел.: 63-4-39. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:200701:316. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, территория землепользования СХПК им. Кирова, земельный участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:200102.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

***

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:150801:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Петрова Клавдия Андреевна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, д. Елжихово, ул. Светлая, д. 39. Петров Николай Алексеевич, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, д. Елжихово, ул. Светлая, д. 39. Купцова Раиса Гурьевна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, д. Елжихово, ул. Светлая, д. 35.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5, тел.: 63-4-39. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:150801:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, территория землепользования СХПК «Чемеево», земельный участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:150801.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

*для пайщиков*
**СОДРУЖЕСТВО**
КРЕДИТНЫЙ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИЙ КООПЕРАТИВ

**МАТЕРИНСКИЙ КАПИТАЛ**
*для покупки и строительства жилья*
***% СТАВКИ ПО ЗАЙМАМ СНИЖЕНЫ***
**ЗАЙМЫ**
*на повседневные цели*
**СБЕРЕЖЕНИЯ**
*АКЦИЯ "МАЙСКИЕ ПРАЗДНИКИ"*
***% СТАВКИ УВЕЛИЧЕНЫ***
*действует с 2 по 31 мая 2012 года*

**62-6-86**
**8 900 333 0001**

с.Моргауши, ул.50 лет Октября, д.23, 2 этаж
www.kpksodrugestvo.ru

## Прогноз погоды

| | среда 30 мая | | | | четверг 31 мая | | | | пятница 1 июня | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | +11 | +19 | +24 | +19 | +16 | +21 | +24 | +19 | +15 | +16 | +22 | +17 |
| Давление мм | 745 | 746 | 746 | 744 | 744 | 744 | 743 | 741 | 742 | 741 | 741 | 742 |
| Влажность % | 88 | 67 | 40 | 60 | 70 | 60 | 50 | 82 | 89 | 98 | 61 | 78 |
| Ветер м/сек | 3 | 4 | 3 | 3 | 4 | 6 | 4 | 1 | 1 | 2 | 3 | 4 |
| | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю-З | З | С-З | З | С-З |
| Солнце восход / заход | | 04:16 | 21:25 | | | 04:14 | 21:26 | | | 04:13 | 21:27 | |
| Луна восход / заход | | 14:38 | 01:36 | | | 16:03 | 01:54 | | | 17:31 | 02:15 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | |

**Пĕлтерӳсем. Объявления**

### Газовые счетчики: делаем правильный выбор

Уважаемые граждане, в соответствии с Федеральным законом от 23.11.2009г. №261-ФЗ установку и ввод в эксплуатацию индивидуального прибора учета газа необходимо обеспечить в срок до 1 января 2015 года.

Установка прибора учета газа должна производиться только опытными и квалифицированными сотрудниками, имеющими лицензию на выполнение таких работ. Все дело в том, что в процессе установки этого оборудования и в процессе оформления разрешений на его монтаж следует придерживаться ряда определенных правил, и иметь представление об особенностях их проведения.

По вопросам, возникшим при выборе и установке прибора учета, Вы можете обратиться в специализированную организацию – филиал «Моргаушимежрайгаз» ОАО «Чувашсетьгаз», а также узнать более подробную информацию на официальном сайте www.chsetgaz.ru в разделе«Информация для населения».

**ОАО «Чувашсетьгаз».**

Лицензия Ростехнадзора от 11.06.2010 № ВП-00-011658 (ЖКС).

* * *

**Тулă, урпа, сĕлĕ сутатăп. Тел.: 8-987-663-99-48.**

* * *

**Магазин «Сельхоззапчасти» реализует: запасные части к тракторам и сельхозагрегатам. Адрес: д. Юнгапоси. Тел.: 8-937-372-02-15, 8-927-859-69-93. 16-16.**

* * *

**Хĕл каçнă хĕрлĕ тĕслĕ чупнă тынашка сутатăп. Тел.: 8-905-197-50-87.**

* * *

**Продаем тракторы Т-25, МТЗ-82.1, плуги, опрыскиватели, косилки, грабли-ворошилки, пресс-подборщики. Все новое. Тел.: 8(8352)40-67-65, 8-927-851-68-58. 4-8.**

* * *

**Требуются монолитчики, каменщики, монтажники, сварщики, плотники. Москва. Вахта, полный соцпакет. Тел.: 8-906-134-87-86. 2-5.**

* * *

**МОРГАУШСКОМУ РАЙПО СРОЧНО ТРЕБУЮТСЯ: парикмахеры, врачи-косметологи, специалисты по маникюру и педикюру, специалисты по депиляции и эпиляции, визажисты, массажисты.**
**Обращаться по тел.: 62-9-40 или 8-937-379-18-08. 2-3.**

* * *

**Проводится конкурсный отбор для включения в кадровый резерв администрации Ярославского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики**

Администрация Ярославского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о приеме документов кандидатов, желающих участвовать в конкурсном отборе для включения в кадровый резерв администрации Ярославского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 30 мая 2012 года.

Кадровый резерв формируется с учётом реестра должностей муниципальной службы, поступивших заявлений муниципальных служащих (граждан) и представляет собой список муниципальных служащих и лиц, не состоящих на муниципальной службе, отвечающих квалификационным требованиям, предъявляемым к соответствующим должностям, обладающих потенциальными способностями, необходимой профессиональной компетентностью для замещения вакантных или вновь образуемых должностей муниципальной службы, замещаемых без ограничения срока полномочий.

Для участия в отборе кандидаты для включения в кадровый резерв представляют следующие документы:

а) личное заявление;

б) собственноручно заполненная и подписанная анкета по установленной форме с приложением фотографии;

в) копия паспорта или заменяющего его документа (соответствующий документ предъявляется лично по прибытии на конкурс);

г) копии документов, подтверждающих необходимое профессиональное образование, стаж работы и квалификацию:

копию трудовой книжки или иные документы, подтверждающие трудовую (служебную) деятельность гражданина;

копии документов о дополнительном профессиональном образовании, о присвоении ученой степени, ученого звания, заверенные нотариально или кадровыми службами по месту работы (службы);

д) заключение медицинского учреждения об отсутствии заболевания, препятствующего поступлению на муниципальную службу;

е) отзыв непосредственного руководителя муниципального служащего с рекомендацией о включении муниципального служащего в кадровый резерв (характеристика – от гражданина, не состоящего на муниципальной службе);

ж) копию решения аттестационной комиссии (при наличии) о том, что муниципальный служащий подлежит включению в установленном порядке в кадровый резерв для замещения вакантной должности муниципальной службы в порядке должностного роста;

з) другие документы, предусмотренные законодательством, а также материалы, которые, по мнению муниципального служащего (гражданина), подтверждают его профессиональные заслуги (справка, публикации, дипломы, рекомендации, книги, брошюры, рефераты и другие).

Прием документов для участия в конкурсе осуществляется в течение 30 календарных дней со дня опубликования данного объявления по 28 июня 2012 года включительно по рабочим дням с 8 до 17 часов по адресу: д.Ярославка ул. Центральная д.5.

За дополнительной информацией обращаться по телефону 64-7-33, эл. почта mrgjros_pos@cbx.ru официальный сайт администрации Ярославского сельского поселения.

СПК-племзавод «Свобода» правленийĕ хуçалăхра механизаторта ĕçленĕ

**Виталий Апполонович**
**ТОЛИКИН**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.
Пичете панă 29.05.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4635.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.